Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

72 (7712) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи сентябрĕн (авăн) 9-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Тăрăшулăхпа палăраççĕ**

## Ответлă ĕçре ответлăха туяççĕ



***Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Апла пулсан шкулта ĕçлекен водительсен те хĕрӳ тапхăр: районти çĕр-çĕр ача вĕренме шкул автобусĕпе çӳретçке. Вĕсене кашни ир шкула, уроксем вĕçленнĕ хыççăн ялсене леçесси – питĕ ответлă ĕç.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Василий Петрович Григорьев (Калайкассинчи вăтам шкул) тата Валерий Владимирович Васильев (Нискассинчи вăтам шкул) – шкул автобусĕсен водителĕсем. Пĕрремĕш çул мар вĕсем çак ĕçре. Çавăнпах вĕренекенсен пурнăçне йăлтах пĕлсе тăраççĕ, районти, республикăри тĕрлĕ конкурссене илсе çӳреççĕ шкул ачисене. Тăрăшса ĕçленĕшĕн вара педагогсен августри конференцийĕнче район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ вĕсене Хисеп грамотисем парса чысларĕ.***

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Республикăра**

## Паянхи çивĕч ыйтусемпе

Тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Республика уй-хирĕсенчи лару-тăру çинчен ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев пĕлтернĕ. Çĕр ĕçченĕсем пĕрчĕллĕ культурăсене пухса кĕртнине пĕтĕмлетеççĕ: гектар пуçне тухăç 23,1 центнерпа танлашать, пĕтĕмпе 570 пин тонна пӳлмене хывнă. Атăлçи округĕнче ĕççие ирттерес енĕпе Чăваш Ен малта пыракан 3 регион шутĕнче. Планпа палăртнă лаптăксен 82 процентĕ çинче кĕрхи культурăсем акнă.

Республикăри муниципалитетсем хутса ăшăтмалли сезона хатĕрленни çинчен ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – хула тăвас ĕç тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министрĕ Александр Гончаров каласа панă.

Канашлура Чăваш Ене Федерацин пурăнмалли çурт-йĕр строительствине пулăшакан фондăн генеральнăй директорĕ Александр Браверман, пурăнмалли çурт-йĕр тума ипотека кредичĕ парассине йĕркелекен агентствăн генеральнăй директорĕ Александр Семеняк, банк тытăмĕсенче ĕçлекенсем килсе кайнипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

Канашлура çавăн пекех Чăваш Енĕн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн ытти çивĕч ыйтăвĕсене те сӳтсе явнă.

**Камăн сăвăм пысăкрах?**

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ АВĂН УЙĂХĔН 8-МĔШĔ ТĔЛНЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (килогрампа)**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 8,0 | -1,0 |
| «Восток» | 8,9 | -1,2 |
| «Герой» | 11,1 | -3,8 |
| Ильич яч. хис. | 11,6 | -1,9 |
| Ленин яч. хис. | 12,4 | 4,0 |
| «Оринино» | 12,3 | 2,7 |
| «Передовик» | 12,3 | 4,1 |
| «Свобода» | 11,7 | -0,3 |
| Суворов яч. хис. | 12,9 | 1,9 |
| «Ударник» | 12,7 | 0,6 |
| Чапаев яч. хис. | 8,1 | -0,5 |
| Чкалов яч. хис. | 10,4 | -3,0 |
| «Хлебороб» | 8,1 | 0,5 |
| РАЙОНĔПЕ | 11,5 | 0,5 |

**Район уй-хирĕсенче**

## Тырă-пулă пӳлмене кĕрет

Авăн уйăхĕн ăшши çĕр ĕçченне умри тĕллевсене туллин пурнăçлама çул уçсах парать. Унпа усă куракансен ĕçĕсем ытларах та ытларах вăй илсе пыраççĕ. Чылай хуçалăхсенче «хир карапĕсем» вырма вĕçлерĕç. Юлнисем те вырма анисенче юлашки каçалăксене тăваççĕ.

Ĕнерхи куна çĕнĕ тырăн вăтам тухăçĕ районĕпе гектар пуçне 24,6 центнерпа танлашать. Уйрăмах пысăк тухăçлисем «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики (50 центнер), Ильич яч. хис. (35,2 центнер), Чкалов яч. хис. (39,1 центнер), «Ударник» (33,9 центнер), «Восток» (31,7 центнер), Суворов яч. хис. (29,4 центнер).

Хиртен йĕтемсем çине пурĕ 30619 тонна çĕнĕ тырă кĕнĕ. Ку кăтарту уйрăмах «Ударник», Суворов яч. хис., «Свобода» хуçалăхсенче пысăк.

«Хир карапĕсем» хыççăнах улăм пуçтарăнса пырать. Ĕнерхи кун тĕлне вырнă пусăсенчен 10508 гектарне (84,5 процент) улăмран тасатнă.

Районĕпе 1687 гектар çĕртме сухи тунă.

Кĕр аки иртterme хуçалăхсем пурĕ 6541 гектар çĕр хатĕрленĕ. Ку вăл малтан пăхнинчен 118,9 процент пулать.

Хуçалăхсем пĕтĕмпе 5747 гектар (104,5 процент) кĕрхи культурăсем акнă. Ку ĕç вĕçленчĕ. Кĕрхисем акассине Е. Андреев яч. хис., «Свобода», «Ударник», Чапаев яч. хис., «Оринино» хуçалăхсем планпа пăхнинчен ытларах пурнăçланă (150, 125, 121, 120 тата 118 процент). Хресчен (фермер) хуçалăхĕсене илсен, А. Толстов, В. Бархаткин, С. Сретинский хуçалăхĕсем кĕрхи культурăсене малтан палăртнинчен 200, 180, 140 процент ирттерсе акса хăварнă.

**Хамăр инф.**

**А.Г. Николаев çуралнăранпа – 80 çул**

## Юбилее халаллану фотоальбом

Иртнĕ эрне кун Чăваш Республикин патшалăх истори архивĕнче «Космос паттăрĕ Андриян Николаев: объективри пурнăç» ятпа йĕркеленĕ электронлă фотоальбомпа паллаштарнă. Ăна вара пирĕн чаплă ентеш, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ Андриян Григорьевич Николаев летчик-космонавт çуралнăранпа 80 çул çитнине халалланă.

Альбомра – истори тата хальхи истори архивĕсенче, çавăн пекех электронлă тата кинодокументсен архивĕсенче упранакан 156 сăн ӳкерчĕк.

Мĕн пур сăн ӳкерчĕке альбомра хронологие пăхăнса вырнаçтарнă. Пуян фотокурав! Чăннипех пархатарлă ĕç тунă чăваш архивисчĕсем. Çакăн пирки паллаштару кунĕнче архивра ăш пиллĕ, XX ĕмĕрти ырă пулăмсене аса илнипе тачă çыхăну-калаçу пынă.

Çав кунах патшалăх архивĕн çĕнĕ ĕçĕпе Чăваш патшалăх педуниверситетĕнче, Шупашкарти кооераци техникумĕнче тата тĕп хулари экономикăпа техника колледжĕнче пĕлӳ илекен студентсем хавхаланса паллашнă.

**Г. ВИХРОВ.**

**Пирĕн интервью**

## Ĕç çи – çĕр улми пуссисенче

***Районти нумай ял хуçалăх производство кооперативĕнче вырма ĕçсем вĕçленнĕ май çĕр ĕçченĕ хăйĕн тимлĕхĕпе тăрăшулăхне «иккĕмĕш çăкăра» вăхăтра пухса илесси çине уйăрма пуçларĕ. Мĕнле пырать-ха кунти ĕç-хĕл? Çак ыйтуран пуçларăм эпĕ калаçăва район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçин çумĕпе А.И. ПАВЛОВПА.***

– Технологие пăхăнса ĕçлекен хуçалăхсем вырма ĕçĕсене вĕçлесе кĕрхи культурăсене те кирлĕ чухлĕ акса хăварчĕç. Паян вĕсем мĕн пур вăйпа çĕр улми пуссисенче тăрăшаççĕ. Районĕпе кăçал «иккĕмĕш çăкăра» иртнĕ çулхинчен 500 гектара яхăн ытларах лартса хăварчĕç. Малашлăха пăхса ĕçлекенсем вĕсене пăхса ӳстерес вăхăтра та технологи йĕркине пăсмарĕç. Паян вăл пусăсенче шăрăх çу кунĕсем тăнине пăхмасăрах тухăç та начар пулмалла мар.

**– Александр Ильич, çĕр улми кăларас ĕçре кăçал комбайнсемпе усă курни анлăрах палăрма пуçларĕ.**

– Çакă та вăл ĕç технологийĕ. Паян хуçалăхсенче ĕçлекенсен йышĕ палăрмаллах чакса кайнăран копалкăсем хыççăн «иккĕмĕш çăкăр» пуçтаракансем те шкул ачисем çеç юлчĕç. Кун пек ларутăрура çĕнĕ техникăпа ĕçлесси хăй тĕллĕнех малти вырăна тухать.

**– Камсем çĕнĕлĕхсене алла илессипе малта пыраççĕ-ха?**

– Çак вăхăтра районти «иккĕмĕш çăкăр» пуссисенче 14 çĕр улми комбайнĕ вăй хурать. Чи нумайăи – 5 агрегат – «Ударник» сăнавлă производство хуçалăхĕнче. «Герой» кооперативра та икĕ комбайн çĕр улми кăларать.

**– Комбайнсемпе çĕр улми кăларассине кăçал пурнăçа кĕртнисем пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Малалла пăхакансене ырламалла кăна. Кăçал çĕр улми кăлармалли комбайнсене «Свобода», Ильич яч. хис. хуçалăхсемпе Ярапайкасси ял тăрăхĕнче çĕр ĕçĕпе ĕçлекен С. Яртеев предприниматель туянчĕç. Комбайнсемпе çĕр улми кăларасси «Картофель» агросоюз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, В. Бархаткинпа



А. Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вăй илсе пырать.

**– Мĕн чухлĕ лаптăк çинче ĕçе пурнăçлама пултартăмăр-ха?**

– Кăçал çĕр улми лаптăкĕ районĕпе 1527 гектар йышăнать. Чи пысăк лаптăк «Ударник» (270 гектар), «Свобода» (190 гектар), «ДаАн» (115 гектар), «Герой» (103 гектар) хуçалăхсенче.

**– Ку ĕçе вĕçленĕ хуçалăхсем районта пур-и?**

– Нумай гектарсемлĕ хуçалăхсенче çĕр улми кăларассипе ĕçсем пур енлĕ вăй илсе пыраççĕ пулсан, «Восток» (13 гектар), «Картофель» агросоюз» (35 гектар), Е. Пайгусова хресчен (фермер) хуçалăхĕ (26 гектар) хăйсен анисем çинче ку ĕçе вĕçлерĕç.

**– Вăтам тухăç еплерех?**

– Ĕнерхи куна район 606 гектар çинчи (39,7 процент) çĕр улмине кăларса пуçтарса кĕртрĕ. «Ударник» хуçалăхра çĕр улми тухăçĕ вăтамран 200 центнерпа танлашать пулсан, район шайĕнчи кăтарту – 153,5 центнер.

**А. БЕЛОВ**
**калаçнă.**

**Кĕскен**

## Çынсем нумай вилеççĕ

ЗАГС пайĕ пĕлтернĕ тăрăх, 2009 çулхи сакăр уйăхра пирĕн районта пурĕ 259 ача çуралнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 254 пепке кун çути курнă. Ачасем çураласси Муркаш (40 ача), Çатракасси (28), Москакасси (24) тата Мăн Сĕнтĕр (22) ял тăрăхĕсенче нумайрах.

Кăçалхи январь–август уйăхĕсенче 429 çын вилнĕ.

Пĕрлешекенсем пурĕ 139 мăшăр пулнă, уйрăлакансем те сахал мар – 57 çемье.

## Кредитсемпе усă кураççĕ

Районти ял хуçалăх пайĕн пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх, иртнĕ 8 уйăхра «АПК-на аталантарасси» патшалăх программипе килĕшӳллĕн районта пурĕ 34 миллион та 202 пин тенкĕлĕх 225 çăмăллăх кредичĕ илнĕ. «Россельхозбанкран» 55 хушма хуçалăх, Перекет банкĕн уйрăмĕнче 170 хушма хуçалăх çак кредитпа усă курнă.

Катькас (39 кредит), Ярапайкасси (26), Мăн Сĕнтĕрпе Ильинка (16-шар) тата Муркаш (15) ял тăрăхĕсенче çак ĕç уйрăмах анлă сарăлнă.

«АПК-на аталантарасси» патшалăх программи ĕçлеме пуçланăранпа вара Муркашсем пĕтĕмĕшле 405 миллион ытла тенкĕлĕх 2538 кредит илнĕ.

**Хамăр инф.**

**ÇЫРĂНТАРУ**

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унччченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**